**Çул çӳрев**

# Атăлçи Пăлхар çĕршывĕнче

Çак çул çӳреве чăтăмсăррăн кĕтрĕм. Атăлçи Пăлхар çĕршывне çитсе курас тĕллев мана тахçанах кăсăклантарнăччĕ-ха. Чăваш тĕпчевçисен ĕçĕсемпе, уйрăмах Каховский профессорăн тĕпчев ĕçĕсемпе паллашнă хыççăн, çак тĕлĕнмелле çĕршыва çитсе куратăпах терĕм. Кĕтнĕ кун çитрĕ. Утă уйăхĕн 5-мĕшĕнче çула тухрăмăр. Пĕлĕтлĕ те ăмăр çанталăк, пирĕн савăнăçа сиссе-ши, сирĕлчĕ те хĕвел ăшшăн кулса ячĕ.

Манпа пĕрле çула тухакансем хамăр Муркаш районĕнчи учительсем пулчĕç. Ытларах чăваш чĕлхи, истори, вырăс чĕлхи вĕрентекенĕсем. Пурин те пĕр тĕллев – чăваш халăхĕн историйĕпе, культурине тарăнрах тĕпчесе пĕлесси.

Çул çӳреве йĕркелекенĕ Калайкассинчи вăтам шкулта чăваш ен культурине вĕрентекен, малалла талпăнакан, татах та ытларах пĕлес текен учитель, ăсчах, аслă мăчавар Евгений Евстафьевич Ерагин пулчĕ. Евгений Евстафьевич нумай пĕлни, историнчи тĕрлĕ вăхăтсене уççăн ăнлантарса пани тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. Вăл нумай архив ĕçĕсене тĕпчесе пĕлни куçкĕретех курăнчĕ.




Акă автобус пире Аслă Таяпана илсе çитерчĕ, унтан Чĕмпĕр хулине. Чĕмпĕр хулинче Иван Яковлевич Яковлевăн шкулĕнче тата музей-хваттерĕнче пултăмăр. И. Яковлев халăхăмăршăн чунтан çунакан çын пулнине çивĕччĕн туйса илме пулать иккен çак шкул картишпе утнă чух. Кунта "Нарспи" поэмăн авторĕ К.В. Иванов та вĕреннĕ, чăваш хĕрарăмĕ Марфа Трубина тата нумай-нумай чăваш çамрăкĕ вăй илнĕ.

Пурин те пĕр тĕллев – халăхăмăра çутта кăларасси.

Чĕмпĕр хулинчен тухсан Сăвар хулине çул тытрăмăр. Унтан Пăлхар, Пӳлер еннелле. Тахçан авал тĕрлĕ сасăпа шавланă хуласем пире шăппăн кĕтсе илчĕç. Çил кăна варкăшса илет.

Вăйлă та хаяр çапăçусем нимĕн те хăварман. Çĕрпе танлаштарнă. Хуп-хура тăпра çинче выртакан чӳлмек ванчăкĕсене алла тытсан чĕре кăлт-кăлт сикрĕ, чун хумханчĕ. Хăш-пĕр чӳлмек ванчăкĕсем вут-кăварпа çунса хуралса ларнă. Сакăрçĕр çул каялла пурăннă, савăннă, çак савăтсемпе усă курнă пирĕн несĕлсем хăюллă та паттăр халăх пулнă Атăлçи Пăлхарта. Ирĕклĕхе юрататнă халăх Чингиз Хан мăшкăлĕ пуласшăн пулманнине туйма пулать хула вырăнĕсемпе паллашнă май.

Нумай-ха тăван халăхăмăр историне пĕлмелли, тĕпчемелли. Тăван чĕлхене вара хакламалла, унтан вăтанма кирлĕ мар.

**Г. ГРИГОРЬЕВА, вырăс чĕлхи вĕрентекенĕ.**

**Кӳстерек ялĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: чылайччен асра юлĕ инçетри çул çӳрев.**

# Валентин Федорович ФЕДОРОВ

2007 çулхи июлĕн 21-мĕшĕнче 65 çула кайса Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта физика учителĕ пулса ĕçленĕ В.Ф. Федоров вăхăтсăр вилсе кайрĕ. Хăйĕн пĕтĕм пурнăçне вăл çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парассине халалланă.



В.Ф. Федоров 1942 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Тойкилтĕ ялĕнче çуралнă. Пĕлӳ пурнăç никĕсĕ пулнине ачаллах ăша хывнă В.Ф. Федоров. 1951-1958 çулсенче Тойкилтĕри 8 çул вĕренмелли шкулта, хыççăн 1959-1960 çулсенче Турайри вăтам шкулта вĕреннĕ.

1960 çулта Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ профтехучилищĕре вĕренсе столяр-платник професссине алла илнĕ. 1961-1963 çулсенче Тăван çĕршыва сыхланă.

Ачаранах вĕрентекенсен пархатарлă ĕçне сăнанă вăл. Совет Çарĕнчен таврăнсан Валентин Федорович пĕр иккĕленмесĕрех учитель пулма шут тытнă. Çавăнпа та 1963-1967 çулсенче И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче пĕлӳ илнĕ. Физикăпа математика уйрăмне пĕтерсе алла диплом илнĕ çамрăк учителе Элĕк районне кĕрекен Ураскилт вăтам шкулне ĕçлеме янă. 1969 çулта вăл Муркаш районĕнчи Очăкассинчи 8 çул вĕренмелли шкулта физикăпа математика вĕрентме пуçлать. 1970 çултанпа мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччenех, 35 çул хушши, ĕç ĕмĕрне Тойкилтĕри вăтам шкулта ирттерет. Тивĕçлĕ канăва тухсан та вăл ял ачисене çĕршыва юрăхлă ӳстерессипе воспитани парас тĕллевпе çак ĕçрех 2 çул тимлет.

Шкулта ачасене вĕрентнĕ хушăрах В.Ф. Федоров радиотехника, фото кружокне ертсе пынă. Вăл яланах обществăлла ĕçсене хастар хутшăннă. Ăна ĕç çынни депутачĕсен районти тата ял канашне депутатне суйланă. Тойкилтĕ шкулĕнчи профсоюз комитетне ертсе пынă. В.Ф. Федоров тăтăшах халăх хушшинче пулса тĕрлĕрен ыйтусемпе тухса калаçнă. Нумай çынна ырă сĕнӳ парса пулăшнă, темĕн чуль ачана вĕрентсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Яланах вĕрентекенсемшĕн те, вĕренекенсемшĕн те ырă тĕслĕх пулнă. Яваплăха çирĕп туякан, хăй тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлакан учителе пурте хисепленĕ, юратнă.

Вĕрентӳ ĕçĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçĕсемшĕн, обществăлла ĕçри хастарлăхĕшĕн В.Ф. Федорова районти çут ĕç пайĕн, комсомол организацийĕн, профсоюз комитечĕн грамотисемпе, тав çырăвĕсемпе тата медальпе наградăланă.

Валентин Федорович сăнарĕ ăна пĕлекенсен, ĕçтешĕсен, шкул ачисен, ял çыннисен асĕнче яланах çуттăн ялкăшса тăрĕ.

**Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул коллективĕ.**

**Спорт**

# Чиновниксем вăй виçнĕ

Июлĕн 14-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнче VI физкультурăпа спорт Спартакиади уçăлчĕ. Унта Чăваш Республикинчи патшалăх влаç органĕн тата вырăнти хăйтытăмлăхра вăй хуракансем ăмăртрĕç. Пĕтĕмпе Спартакиадăна 50 команда хутшăнчĕ. Муркаш район администраци команди мини-триатлон, комбинациллĕ эстафета, автомобильпе фигурăсем тăвас, канат туртас, йăлана йĕркелес, çемье командисем хушшинчи комбинациллĕ эстафета ăмăртăвĕсенче вăй виçрĕ.




Комбинациллĕ эстафета ăмăртăвĕнче Р.Ю. Смирнова (ишесси), А.Н. Петрова (çăмăл атлетика кросĕ), М.А. Романов (велокросс) хисеплĕ пиллĕкмĕш вырăна тивĕçрĕç. Чăваш Республикинчи район администрацийĕсем хушшинче мини-триатлон енĕпе А. Петров иккĕмĕш вырăн çĕнсе илчĕ, пĕтĕм командăсем хушшинче вара пиллĕкмĕшне тивĕçрĕ. "Волга" автомашинăпа фигурăсем тăвассинче район администраци пуçлăхĕн çумĕ В.Г. Никитин, вĕрентӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи Л.И. Мочалов, район администраци водителĕ А.Ю. Сергеев хутшăнчĕç, пиллĕкмĕш вырăна тивĕçрĕç. Çавăн пекех комбинациллĕ эстафетăра Павловсен çемьи пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Канат туртассинче вара Чăваш Республикинчи чи лайăх командăсен тăвата ушкăнне лекме пултарнă. Муркашсем чăнах та лайăх енĕпе палăрчĕç. Çитес çул вара татах та пысăкрах çитĕнӳ тăвасса шанас килет.

# Япăх мар ăмăртнă

Июлĕн 7-9-мĕшĕсенче Вăрмар районĕнче маунтинбайк енĕпе Раççей Кубокĕн 10-мĕш тапхăр ăмăртăвĕсем иртнĕ. Унта Муркашри В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче ăсталăх пухакан çамрăк спортсменсем те хутшăннă. Июлĕн 8-мĕшĕнче ушкăнпа тата ралли-кросра, июлĕн 9-мĕшĕнче кантри-кросра вăй виçнĕ. 1995-1996 çулсенче çуралнă хĕр ачасем хушшинче Наташа Налимова 2-мĕш, Людмила Леонтьева 3-мĕш, Зоя Вязова 4-мĕш вырăнсем çĕнсе илме пултарнă. 1995-1996 çулсенчи хĕр ачасемпе арçын ачасем хушшинче Людмила Филиппова (3-мĕш вырăн), Снежана Федотова (4-мĕш вырăн), Евгений Казамбаев (6-мĕш вырăн) палăрнă.

Июлĕн 14-мĕшĕнче вара çак енĕпех Чăваш Республикинче мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ. 1997 çултан




çамрăкрах хĕр ачасем хушшинче Наташа Федотова 1-мĕш тата Настя Николаева 2-мĕш вырăнсене йышăннă, 1995-1996 çулсенчи хĕр ачасем хушшинче Светлана Леонтьева (2-мĕш вырăн) тата Зоя Вязова (3-мĕш вырăн) япăх мар результатсем кăтартнă.

Июлĕн 20-мĕшĕнче Шупашкарта маунтинбайк енĕпе Раççейре мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ. 1993-1994 çулсенчи хĕр ачасем хушшинче Людмила Филиппова ăмăртусен пăхăр призерĕ пулса тăнă.

Ачасене ăмăртусене хатĕрлекенĕ – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ, Муркашри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ И.В. Воробьев.

Ăмăртусене хутшăнма пулăшнăшăн «Чебоксарский мельник» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçине Валерий Валерианович Жукова пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Сăн ӳкерчĕкре: Снежана Федотова тата Людмила Филиппова.**

**Чĕререн тав**

# Страхланма ан манăр

Çак сăмахсемпе килĕшсе эпĕ те тĕрлĕ инкек-синкекрен асăрханса «Чувашия-Поддержка» страхлакан компанире кил-çурта та, ытти пурлăха та, выльăх-чĕрлĕхе те, хамăра та страхлас терĕм.

Страхлани маншăн питĕ усăлă пулчĕ. Июнь уйăхĕнче пирĕн ĕне сарăмсăр вилсе кайрĕ. Страхлакан компани пире ĕне хакне алла тавăрса пачĕ. Куншăн компани ĕçченĕсене пысăк тав сăмахĕ калас килет.

**Г. ПАСТУХОВ.**

**Мăн Токшик ялĕ.**

**Тав сăмахĕ**

# Ырлăх-сывлăх сире

Çын чирлемесĕр пулмасть. Эпĕ те питĕ хытă чирлесе ӳкрĕм. Мана Мăн Сĕнтĕр больницинче вăй хуракансем сыватрĕç, ура çине тăма пулăшрĕç. Çавна май эпĕ унти тухтăрсене, медицина сестрисене вăрçă ветеранĕ ячĕпе чĕререн тав сăмахĕ калатăп, ырлăх-сывлăх сунатăп.

**Е. ЛЬВОВА.**

**Хачăк Сали ялĕ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаем цемент, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид, лаки, краски, обои. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».**
**Тел.: 8-903-346-40-58. 2-5.**

**Продаю автомобиль марки ВАЗ-21063 1990 года выпуска в хорошем состоянии, цена договорная (не дорого).**
**Тел.: 8-927-857-95-71.**

**Продается автомашина 1997 года выпуска марки ВАЗ-2106 в хорошем состоянии цвета сафари. Цена договорная. Тел.: 8-905-029-20-28, 8-906-135-18-91.**

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии следующих свободных земельных участков к распределению на правах аренды, для ведения сельскохозяйственного производства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на них, расположенных на территории Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики:

| № п-п | Месторасположение земельного участка | Кадастровый номер участка | Целевое назначение | Площадь кв. м |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Участок находится примерно в 100 м. по направлению на юго-запад от ориентира водонапорная башня, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Обрыскино | 21:17:28 08 01:0054 | Для ведения личного подсобного хозяйства | 6000 |
| 2. | Участок находится примерно в 50 м. по направлению на юго-запад от ориентира водонапорная башня, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Обрыскино | 21:17:28 08 01:0055 | Для ведения личного подсобного хозяйства | 6000 |

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Тойкилтĕри вăтам шкул коллективĕ кунта нимĕç чĕлхине вĕрентекен Н.Н. Федорован юратнă мăшăрĕ, çак шкулта нумай çул хушши физика учителĕнче ĕçленĕ

**Валентин Федорович ФЕДОРОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Районти çар комиссариачĕн коллективĕ кунта пĕрремĕш уйрăм пуçлăхĕн аслă пулăшаканĕ пулса ĕçлекен В.В. Игнатьеван амăшĕ тата пĕрремĕш уйрăм пуçлăхĕн пулăшаканĕ пулса ĕçлекен Л.Р. Игнатьеван хуньамăшĕ

**Анна Ивановна ИГНАТЬЕВА**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле хурланса пĕлтерет.

**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
**Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3410.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 24.07.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.